Г.Т.ТИМОФЕЕВ ÇЫРАВÇĂ-ЭТНОГРАФ ÇУРАЛНĂРАНПА 125 ÇУЛ

# ЧЫСЛĂН ПАЛЛĂ ТУРĔÇ



***«Хальхи этемсем «Тăхăрьял» тесе çав Таккаварне, Шемекне, Раккассине, Киштекне, Элшелне, Пимĕрселне, Пÿркелне, Хирти Кушкăна, Кивĕ Мертлĕпе Çĕнĕ Мертлĕне, унтан тата Чăваш Саркăмăшне хисеплеççĕ». Çак сăмахсем «Тăхăрьял» кĕнекерен. Ăна çыраканĕ хальхи Чăваш Республикинчи Куславкка районне кĕрекен Тĕрлемес ялĕнче çуралса ÿснĕ Г.Т.Тимофеев. Çак кунсенче вăл çуралнăранпа 125 çул çитнине Чăваш Республикинче те, Тутарстанра та чыслăн паллă турĕç. Январĕн 21-мĕшĕнче тĕпчевçĕн çуралнă кунĕпе çыхăннă юбилей мероприятийĕсем Тĕрлемесре, каярахпа вара, иртнĕ эрнере, вăл хăйĕн пурнăçĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ ĕç тума пултарнă Тăхăрьял тăрăхĕнче, Элшел ялĕнче иртрĕç.***

— Малтанах эпир ку уява шкултах ирттерме шутланăччĕ, — каласа парать Элшелĕнчи вăтам шкул директорĕ Владимир Ильич Афанасьев. — Пытармастăп, иккĕленни те пулчĕ — манман-и, аса илейĕç-и ыттисем пирĕн Григорий Тимофеевич Тимофеева? Тен, вăл пирĕншĕн, тăхăрьялсемшĕн кăна çапла чыслă курăнать? Анчах та вырăнти «Родина» хуçалăх ертÿçи Вячеслав Петрович Чернов манăн иккĕленÿсене самантрах сирсе ячĕ. «Мĕнле вăл шкул шайĕнче кăна, вăл тунă ĕç шкулшăн е Тăхăрьялшăн кăна мар, мĕнпур чăвашсемшĕн-çке, апла пулсан Г.Т.Тимофеев çуралнă кунне район, республика шайĕнче тумалла. Ун пек тумасан эпир хамăр историне, хамăр халăха сума суманни пулать». Район администрацийĕнче те пирĕнпе килĕшрĕç, администраци пуçлăхĕ А.К.Садретдинов пулăшма шантарчĕ.



Январĕн 27-мĕшĕнче Элшелĕнчи Культура çурчĕн пысăк залĕ халăхпа лăк тулчĕ. Тăхăрьяла кĕрекен кашни ялтан çынсем килсе çитнĕ. Сцена çинче, президиумра вара ку тăрăхран тухнă чи сумлă çынсем тата хаклă хăнасем.

Ларăва ертсе пыма вырăнти шкулăн истори учительне, Евгений Ильич Афанасьева шанса панă. Чи малтанах вăл Элшел шкулĕн чăваш чĕлхипе литература учительне Марина Марковна Семеновăна сăмах пачĕ. Вăл Г.Т.Тимофеевăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен анлăн каласа пачĕ. Ун сăмахĕсене итлесе ларнă май çĕнĕрен те çĕнĕ шухăшсем çуралаççĕ пуçра. 1896 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтерсе çак Элшел ялне килсе çитнĕ вăхăтра вăл вунсаккăрта кăна пулнă-çке. Мĕнле-ха çак, хальхипе танлаштарсан, анчах шкул пĕтернĕ, салтакра та пулса курман ача çакăн пек пысăк ĕçе тытăнма ăсне-халне çитерме пултарнă. Тен, вăхăчĕ урăхла пулнă? Е тата Тăхăрьял çĕрĕ хăй ыттисенчен темпе уйрăлса тăрать. Шутласа пăхсан, мĕн чухлĕ чаплă çыравçăсемпе пуян-ха вăл.



Николай Дедушкин, Тайăр Тимкки, Владимир Ухли, Юркка Иванĕ, Мĕтри Юман, Валентин Урташ, Анатолий Нозул, Александр Харитонов, Александр Кăлкан — вĕсем пурте чăваш литературинче тарăн йĕр хăварнă. Халĕ вара Галина Кĕмĕл, Владимир Чебоксаров, Константин Петров, Михаил Смирнов, Давид Шашкин, Валериан Ашкеров, Николай Зимин, Николай Дворов тата ыттисем Тăхăрьял чапне чакарас мар тесе нумай вăй хураççĕ.

Юбилей каçĕ вăл вăхăтра малалла тăсăлать, ертсе пыраканĕ Г.Т.Тимофеева çуратнă Тĕрлемес çĕрĕнчен килсе çитнĕ хăнасене сăмах парать. Унтан Элшелне йышлă делегаци янă. Тĕрлемес ялĕн администраци пуçлăхĕ Елена Михайловна Рязанова пухăннисене Тăхăрьял авторĕ çуралнă ял çинчен каласа пачĕ. Тĕрлемесри шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен И.Г. Майорова вырăнти шкул музейĕн заведующийне Е.И. Афанасьева Куславкка районĕн Асăну кĕнекине парнелерĕ.

Тамара Даниловна Ветлова, хăй те Г.Т.Тимофеева тăван лекет, Тĕрлемес шкулĕ çумĕнчи таврапĕлÿçĕсен ушкăнне ертсе пырать. Вăл пуçтарăннисене писатель-этнографăн пурнăçĕ çинчен тепĕр хут каласа пачĕ. Вăл каланинчен Г.Т.Тимофеев мĕнлерех лару-тăрура ÿсни, вăл шкулта вĕренни, кунта И.Я.Яковлев килсе ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме чĕнни çинчен сăнарсем куç умне тухаççĕ. Григорий Тимофеевичăн çемйинче 12 ача пулнă иккен. Вĕсенчен чи кĕçĕнни, Нина хĕрĕ, паян кун та пурăнать. Халĕ Тĕрлемесре Г.Т.Тимофеев музейне уçма шутлаççĕ.



Сăнÿкерчĕксенче: юбилейлă каç президиумĕ; Тĕрлемесри шкул директорĕ Ф.А. Полякова музей валли парне парать; концерт саманчĕсем.

Тĕрлемесрен килнĕ делегацин ертÿçи, вырăнти шкулăн директорĕ Фаина Агеевна Полякова Тĕрлемес ялĕнчи урамсенчен пĕрне Григорий Тимофеев ятне пама йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Вăхăт иртсе пырать — килнĕ хăнасем те сцена çинчи трибуна çине тухса сăмах калаççĕ. Пăва район администраци пуçлăхĕн çумĕ И.С. Литвина пухăннисене писатель-этнограф юбилейĕпе саламларĕ, Пăва районĕ пĕлтĕр Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Туслăх медальне илме тивĕçни çинчен пĕлтерчĕ. «Çакă, паллах, кунта тĕрлĕ нацисемпе конфессисем хушшинчи хутшăнусем лăпкă, пĕр тикĕс, хирĕçÿсемсĕр пулни çинчен калать», — терĕ вăл.

Тăхăрьял историне хальхи вăхăтра тĕпчекеннисенчен пĕри — А.М.Малышев, Пÿркел шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учителĕ М.П.Вериялов писатель-этнографа чысланисĕр пуçне чăвашлăх умĕнче тăракан паянхи кăткăс ыйтусем çинчен те асăнчĕç. Г.Кĕмĕл, Н.Дворов сăвăçсем çак чаплă юбилее халалласа çырнă сăввисене вуласа пачĕç. Тăхăрьялăн тепĕр мухтавлă ывăлĕ В.А.Дедушкин Элшел ялĕнче уçма палăртнă музей валли чылай экспонат парнелерĕ.

Юлашкинчен пуçтарăннисем, Элшелĕнчи вырăнти хăйтытăмлăх канашĕн председателĕ В.А.Афанасьев сĕннипе, пĕр çын пек пулса ялти пĕр урама Г.Т.Тимофеев ятне памалла тесе сасăларĕç.

Официаллă пай вĕçленнĕ хыççăн сцена çине артистсем тухрĕç. Чăн та, чаплă çыравçăсемпе кăна мар, пултаруллă артистсемпе те пуян иккен Тăхăрьял тăрăхĕ. Надя Артемьева, Аньăпа Настя Чауковăсем, Алеша Фролов, Кристина Дедушкина, Екатерина Карамзина тата ыттисен пултарулăхĕ пурне те савăнтарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те.

Çак вăхăтра тахçантанпа кĕтнĕ Шупашкар хăнисем те килсе çитрĕç. Вĕсем кунти чăвашсемшĕн чи пысăк парне — нумай пулмасть Шупашкарта пичетленсе тухнă «Тăхăрьял» кĕнекен иккĕмĕш кăларăмне илсе килчĕç. Кĕнеке хакĕ те пĕчĕкех мар пулин те, пуçтарăннисем хушшинче вăл кĕске вăхăтрах саланса пĕтрĕ. Шупашкар делегацийĕн ертÿçи, ЧР тата РФ писательсен союзĕн членĕ П.П.Сидоров çывăх вăхăтра кĕнекене кунта татах илсе килме шантарчĕ.

Кĕске вăхăтлăха чарăннă хыççăн концерт малалла тăсăлчĕ. Хальхинче вара вырăнти артистсем патне Шупашкартан килнĕ пысăк сцена юрăçĕсем те хутшăнчĕç. Александр Орлов, Елена Соловьева, Вячеслав Бахтеркин, Тамара Гурьевăпа Зоя Лисицына пуçтарăннисене илемлĕ чăваш юррисемпе савăнтарчĕç.

Василий Дедушкина пĕр вырăнта ларнине сайра куратăн. Хальхинче те акă вăл Элшел хĕрарăмĕсем вăйă тата туй юррисем юрласа пама тытăнсанах чăтса лараймарĕ, сцена çине тухса вĕсемпе пĕрлĕ юрлама пикенчĕ:

*Элшелийĕн ачисем*
*Сахăр лавкки лараççĕ,*
*Çавăнпа сарă пулаççĕ.*
*Кашасенĕн ачисем*
*Тикĕт лавкки лараççĕ,*
*Çавăнпа хура пулаççĕ...*

*Садра улма пиçет-çке,*
*Çÿлти çутă çăлтăр пек!*
*Атăлтан арпус тухать-çке,*
*Тулса тухнă уйăх пек!*
*Тăхăрьял хĕрĕ ÿсет-çке,*
*Станран тухнă çурта пек!*

**Игорь МАТВЕЕВ,**
**Василий ДЕДУШКИН.**

# ТĂХĂРЬЯЛ ТĔПЧЕВÇИ

## Чăваш этеплĕхĕн* сулмаклă пайĕ

Куллен-кун тĕл пулакан пулăмсем çынсене кăсăклантарма чарăнаççĕ. Куç та, ăс та хăнăхса çитеççĕ. Çав сăлтава пула XIX ĕмĕрте Тăхăрьял çĕрĕ çинче пурăнакан чăвашсем хăйсем ыр-хаяр тĕнĕпе пурăннине — хăй йĕркипе пулса пыракан япала тесе шутланă. Пурте ăнланмалла тата ансат туйăннă вĕсемшĕн. Чӳк — ĕç — чӳк — уяв пĕр-пĕрин хыççăн çултан-çула тăсăлнă, вĕçĕмсĕр пурнăçа çаврăннă. Çакă çĕр ĕçлекенсене çут çанталăкпа килĕштерсе пурăнма, çынсемшĕн ырă ĕçсем тума, асаттейсем хушса хăварнă йăла-йĕркесене упрама пулăшнă.

Ытти вырăнсенче çак авалхи пурнăç йĕркисем самаях сĕвĕрĕлнĕ пулнă, çав шутра Григорий Тимофеевич Тимофеев çуралса ӳснĕ Тĕрлемес енче те. Çавăнпа та Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен тин кăна вĕренсе тухнă вунсакăр çулхи учитель Тăхăрьялăн пĕр ялне — Элшелне ачасене вĕрентме килнĕскер, кунти халăх епле пурăннине курать те, тĕлĕнсех каять. Çав йăла-йĕркесене çырса илме пикенет. Тăхăрьялти чăваш хресченĕсен пурнăçне мĕнле пулнă çаплипех çырса кăтартать, малашнехи ăрусемшĕн летопись евĕр ĕç çырса хăварма тĕллев лартать. Сĕве тăрăхĕнчи чăвашсен пурнăç йĕркисен никĕсĕнче вĕсен сĕм авалтан килекен чӳклевлĕх тĕнĕ пулнине палăртать. Çав вăй çуратнă та иккен хăйне евĕр кĕлĕсем, хӳхлевсем, юрăсем, мешехесем, шыв пек юхса пыракан пурнăç йĕркине.

Епле пуç таймăн çак пуянлăх умĕнче? Анчах мĕн чухлĕ ĕç тумалла!

Ялти учитель тĕп ĕç хыççăн ырми-канми ĕçлесе халăх сăмахлăхĕн пуххине, авалхи çĕрĕн историне, унăн пурнăç йĕркисене тĕпремĕн-тĕпремĕн пуçтарса çичĕ çулта пысăк калăплă «Тăхăрьял» ятлă этнографиллĕ тĕрленчĕк хатĕрлесе çитерет.

Кунта çакна та каласа хăвармалла. Григорий Тимофеевич ĕçе килнĕ çулсенче Тăхăрьял енче чӳклевлĕх çĕнĕрен çĕкленнĕ тапхăр пулнă. Раççейре революциллĕ юхăм амаланнă тапхăрта Тăхăрьял чăвашĕсем хăйсен авалхи тĕнне çĕнетсе яраççĕ. Ялсенче мăчавăрсем палăртаççĕ. Тăхăрьялпа пуçтарăнса ирттерекен чӳк пысăк форум евĕр иртме пуçлать. Çакна вĕсем революциллĕ улшăну пек ăнланнă. Халăх ĕçĕ, ирĕклĕх тенĕ.

Г.Т.Тимофеев хăй те нумай тĕпчеме тăрăшакан, лара-тăра пĕлмен, чунĕпе пур çынпа та усă пулнă. Вăл питĕ хитре юрлама пултарнă, сĕрме купăспа вылянă, ачасене нота йĕркине ăнланма хăнăхтарнă. Ачасем юратнă учительне халăх юррисене, ваттисен каларăшĕсене пуха-пуха панă.

«Улттăмĕш çул пурăнатăп çак Элшелĕнче... Палламан çын, пĕлмен япала юлмарĕ. Куçăм курнă таран, хăлхам илтнĕ таран мĕн пуррипе çуккине пĕлтĕм...», — хăватланса çырать вăл. 1903 çулта, ачалла ачашласа çитĕнтернĕ ĕçне Чĕмпĕре çитерет. Вăл çулсенче чăвашсен этеплĕх путмарĕ çак хулара пулнă. Чăмăртанса пыракан чăваш интеллигенцийĕ Г.Т. Тимофеев ĕçне çийĕнчех асăрхать. Г.И.Комиссаров çав тапхăрти асаилĕвĕсенче «Тăхăрьял» авторне çыравçă тесе палăртать. Ун чух çак ята тивĕçлисене шутлама хăрах алăри пӳрнесем те ытлашши пулнă.

Çĕршывĕпех палăрнă Н.И. Ашмарин ученăй «Тăхăрьял» авторĕпе 1901 çултанпах тачă çыхăну тытнă, Г.Т.Тимофеев пухнă пуянлăхпа хăйĕн ĕçĕсенче ялан усă курнă. «Тимофеев хĕшпĕр тетрачĕсенче çырнисене кăмăлпах итлесе лартăм, хам та вуларăм», — тесе пĕлтерет вăл И.Я. Яковлев патне янă çырăвĕнче. Чăвашсен ку шайри этнографи ĕçĕсем пачах та çуккипе ăна кун çути кăтартасси «пит селĕм» пулассине асăрхаттарать.

«Тăхăрьял» пирки ун чухнехи хаклавçă-тишкерӳçĕсем Н.В.Никольскийпе Тинехпи те ырран асăннă.

Анчах официаллă идеологи çыннисем ялти учитель чăвашсен ырă-хаярлăх йĕркисене çутатса панине сивлесе кĕтсе илеççĕ. «Укса çуккипе» Г.Т.Тимофеевăн ĕçĕ пичетленеймест. Тĕлĕнмелли нимех те çук кунта. Ун чухне чăваш халăхĕ патне çитекен пур çырулла хута та Вĕрентӳ министерстви сумĕнчи уйрăм пай, Синодăн вĕрентӳ комитечĕ тата Хусанти çветуй Гурий братстви питĕ тимлĕ тишкерсе тăнă.

Вĕрентӳ пайĕнче халăхран пухнă юрă-хӳхлевсем çине еплерех пăхни И.Я.Яковлев инспектор Юркка Иванĕ пухнă юрăсене хакласа Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен директорĕ И.В.Ишерский патне янă çырăвĕнчи йĕркесенчен те курăнать. «...Юркин пуçтарнă юрăсемпе эпĕ ал çыру халлĕнех паллашнăччĕ. Вĕсем интереслĕ мар, тытăмсăр. Çавăнпа та Юркин çырнисене училищĕсем валли туянмалла мар, вĕренекенсем те вĕсем çинчен ан пĕлчĕр.» (И.Я.Яковлев. «С думой о народном просвещении». Чебоксары. 1998, с.103).

Çакăн пек хаклав халăх сăвви-юрри православи тĕнне сарма чăрмантарнинчен шикленнипе çыхăннă. Халăх юррисем тарăн шухăшлă, хăйне евĕр философиллĕ пулнине ăнланнă учитель вĕсем хăй ăшĕнчи туйăмсемпе те килĕшуллĕ янăранине асăрхать.

*Шевкенсем енчен çилсем вĕрет,*
*Çил арманĕн çунатти хуçăлать,*
*Çичĕ ютран сивĕ сăмах илтсен*
*Пирĕн чĕресене çав хуçать.*

Акă вăл халăх пултарулăхĕ. Пурнăçа юрра хывма пултарнă халăх — мĕскĕн



мар! Анчах хăйне ăнланманнипе питĕ кулянать тĕпчевçĕ.

*Ĕнтĕ пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать,*
*Тата мĕн çăвассисем пур-ши-ха?*
*Ĕнтĕ пуçăм çамрăк, ĕмĕр кĕске,*
*Тата мĕн курассисем пур-ши-ха?*

Курасси вара куç умĕнчех пулнă. Г.Т.Тимофеева йывăр çулсем кĕтеççĕ: ĕçе тата пурнăç идеалĕсене пăрахăçлани, вырăнтан-вырăна куçни, иртнĕ ĕçхĕлсемшĕн хĕсĕрлени...

Çак сăлтавсене пула «Тăхăрьял» ал çыравĕ, Раççей тăрăх вăрах сĕтĕрĕннĕ хыççăн, 1926 çулта тин Чăвашсен сутĕç пайĕн комиссариатне лекет.

Ăнланаççĕ кунта, «...Тимофеев çырса кăтартнă пулăм — япаласенчен чылайăшне халыхи хăватлă витĕм пурнăçран хăварт тата яланлăхах çухатать...» Ăна туянаççĕ. Г.Т.Тимофеевăн ытти ĕçĕсем те пулнă. Çав шутра «Тăхăрьял чӳкĕ» ятлă ал çыру та. Вăл яланлăхах çухалнă. Анчах унăн ĕçĕсем каллех «çĕнĕ пурнăçра кирлех мар» пулса тухаççĕ. Апла пулсан та «Тăхăрьялтан» илнĕ сыпăксем, хăш чух авторне палăртмасăр, тĕрлĕ кĕнекесенче пичетленеççĕ.

1972 çулта тин А.В. Васильев хатĕрленĕ «Тăхăрьял» кун курчĕ. Н.С.Дедушкинăн пайĕ те пур кунта. Анчах çав çулах питĕ сайра тĕл пулакан кĕнекене çаврăнчĕ. Чăваш ялĕсенчи библиотекăсене çитмерĕ вăл.



Г.Тимофеев çемйипе,1936 ç.



Григорий Тимофеев,1937 ç.

Çĕнĕ çул умĕн ырă хыпар сарăлчĕ. «Тăхăрьял» çĕнĕрен пичетленнĕ теççĕ. Ăнланмалла. Малалла каяс тесен, халăхăмăрăн иртнĕ кунçулне пĕлмеллех.

Г.Т.Тимофеев ячĕ, унăн ĕçĕсем халăхăмăр çĕр çинчен каймасăр та манăçмĕç. Вĕсем чăваш культурине пĕр сулмаклă пайăрка пулса кĕрсе юлчĕç. Çав пуянлăхсăр эпир тĕнчерен катăк курăнатпăр.

## Тĕпчевçĕ ăраскалĕ: хурапа шурă кĕрешĕвĕ

Çын хăйĕн телейне хăй туптать, теççĕ. Çапла та пулĕ, анчах ĕмĕрĕнчи пулăмсем те хутшăнаççĕ çав туптава.

Ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăман учитель, çĕнĕ çĕре ĕçлеме килсен, çакăнти пурнăç йĕркисемпе кăсăкланса вĕсене тĕпчеме тытăнать. Юратса пăрахать вăл кунти халăха. Арăмне те, хут пĕлменнине шута илмесĕр, Элшелĕнченех суйласа илет. Дарья Никифоровна (1878–1948 çç.) питĕ ăста юрăçă пулни те паллă. Пурнăçра та шанчăклă мăшăр пулнă вăл. Вĕсем, пурнăçри пăтăрмахсене пăхмасăр, ултă ача ӳстерсе çитĕнтернĕ: Сергей — 1900 çулхи, Анна — 1904, Зоя — 1910, Александра — 1913, Аркадий — 1916, Нина — 1923 çулхи.

Тимофеев-учитель 1908–1915 çулсенче Элшел ялĕнче священник пулса ĕçленĕ. Вăл вăхăтра учительсем тĕн енне куçни темле çĕнĕлĕх пулман. Вăхăчĕ çапла хистенĕ пулмалла. Этем ялан аванни пирки ĕмĕтленет. Г.Т.Тимофеев та хăй шăпине ют çĕрсенче тĕрĕслесе пăхасшăн пулать. 1915 çулта Томск çывăхĕнчи Топики прихутне ĕçе вырнаçать. Çемйине те илсе каять. Питĕ хумханулă пулнă теççĕ çав уйрăлу. Учителе, священнике пĕтĕм ялĕпе пухăнса ăсатнă. Уйрăлăва куç умне ӳкерсен, ирĕксĕрех Григорий Тимофеевич пухнă юрăсем аса килеççĕ.

*Элшелийĕн урамĕ сакăлталлă,*
*Сакăлтисем пĕтĕç юр кайсан.*
*Элшелийĕн урамĕ — илемлĕ урам,*
*Илемĕсем пĕтĕç эсир кайсан.*
*Пӳсрен те çипиркке эп çĕлетрĕм,*
*Çаннийĕсем вăрăм та, пӳ кĕске.*
*Ĕнтĕ тăванăмсем, çунатăмсем,*
*Каяс çулсем вăрăм та, кун кĕске.*

Топики ялĕнче Г.Т.Тимофеев çемйи 1917 çулхи революцие, граждан вăрçине тӳссе ирттерет. Чиркӳ çуртĕнчен клуб туса хунă хыççăн мунчасенче, çынсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳресе аптăрасан, 1923 çулта, çĕнĕрен Элшелне таврăнать. «...Элшелне пулмасăр тата ăçта каям-ха эпĕ? Çакăнта манăн пĕтĕм вăй-хал пĕтнĕ, унта пĕтĕм хурăнташ, ман пĕтĕм тĕнче...», — тесе çырнă вăл А.М. Харитонов патне янă çырăвĕнче.

Анчах Элшелĕнче те хăватлă витĕм вăй илет иккен. Вăл ялта пулман çулсенче кунта çĕнĕ ăру ӳссе çитĕннĕ. Вĕсемпе ĕлĕкрех калаçнă пек калаçма çуккине ăнланать Элшел пупĕ. Ялти комсомолецсем ăна диспута чĕнеççĕ. «Тĕнчере Турă пур-и е çук-и?» — пĕлес килет вĕсен. Çак ĕçсем хыççăн Г.Т.Тимофеев пуп ĕçне пăрахăça кăларса шкулта, учительте ĕçлеме тытăнать. Çамрăклах тапхăрĕнчи этнограф туйăмĕ чĕрĕлет унра.

1925 çулта Г.Т.Тимофеев Шупашкара куçса каять, тăлмач ĕçĕпе пурăнать. Пурнăçĕ çăмăлах пулмасан та, çыравçăсемпе хутшăнать, вĕсен «Канаш» пĕрлешӳвне кĕме хут çырать. Каллех ачасене вĕрентес ĕçе кӳлĕнет. Хавхаланса ĕçлемелли вăхăтсем çитеççĕ.

«Ара, хамăр несĕлсен ĕмĕтĕнчи Чăваш çĕршывĕнче пурăнатпăр мар-и? Кам шутлама пултарнă çак кунсене курасса? Ăçта-ши манăн вырăн çĕнелнĕ пурнăçра?» — çак ыйтусем канăç паман этнографа.

Эх, пурнăç, пурнăç! Санра ялан икĕ вăй, икĕ тĕс кĕрешеççĕ. Çутă тата хура. Хури ялан çутта хупласшăн. Анчах çутă ялтăрама чарăнмасть.

Г.Т.Тимофеев тата унăн тăшманĕсемпе те çавăн пекех пулса тухнă. Пĕтĕм чунне ачасене парса тăрăшсан та, малтан пуп пулса ĕçленĕ çынна, ăçта кайсан та иккĕленсе йышăнаççĕ, хĕсĕрлеççĕ, элеклекен çынсем тупăнаççĕ. «Шăши туяпа çӳренĕ тапхăрта» шикленмесĕр пурăнма пулман. Элшелĕнче хăй вĕрентнĕ каччă-и вăл е Топики ялĕнчи чиркӳ старости-и, пурнăçра вырăн тупайман çыравçă-и е Новокузнецкри кĕвĕçуллĕ учитель, Анат Кăрмари «ырă сунакан-и» е ачасен ячĕпе çыракан çăхавçă — пурте вĕсем хăйсен хура тĕсĕпе Г.Т.Тимофеев çуттине хупласшăн тăрмашнă. Сталин репрессийĕ вăй илсе пынă çулсенче айăпсăр çынна та айăплассах йывăр пулман теççĕ.

1937 çулхи çулла НКВД ĕçченĕсем Г.Т.Тимофеева Колчак штабс-капитанĕ Лягсберг йĕркеленĕ çар пĕрлешӳвĕнче тăнă тесе айăплаççĕ. «Тройка» текен ушкăн хушнипе октябрĕн 17-мĕшĕнче персе вĕлереççĕ. Суя ĕçе 1967 çулта Оренбург облаçĕнчи суд пăрахăçа кăларать. Г.Т.Тимофеевăн айăпĕ çуккине çирĕплетет.

Çутă çĕнтерет. Анчах кама савăнтарать-ха çакă? Пысăк çемьерен икĕ хĕрĕ çеç юлнă. Вĕсем те, ашшĕ «халăх тăшманĕ» шутланнăран, пурнăçĕсенче пайтах терт тӳснĕ. Хут çинче ачисем ашшĕшĕн яваплă тытмаççĕ тенĕ пулсан та, пурнăçра урăхла килсе тухнă.

2003 çула кĕтĕмĕр. Г.Т.Тимофеев хăйĕн «Тăхăрьялне» пухса хатĕрлени шăп çĕр çул çитрĕ. Кĕнеки вара паянхи вулавçăсен кăмăлĕсене те тивĕçтерет. Ялан çĕнĕ, вăхăтлă.

Çав кĕнекене алла илмессерен унăн авторĕ пурнăçĕнче мĕнле сехмет курнине аса илни — сăваплăх.

* Этеплĕх — культура.

Анатолий МАЛЫШЕВ.